Айдаш Ю. Слакпуç çăлĕсем патĕнче / Ю. Айдаш // Коммунизм ялавĕ. – 1973. – 7 çĕртме.

# СЛАКПУÇ ÇĂЛĔСЕМ ПАТĔНЧЕ

Майăн 28—30-мĕшĕсенче, виçĕ кун та виçĕ çĕр пултăмăр эпир тăванла Пушкăртра. Эпир — Çеçпĕл Мишши ячĕпе хисепленекен преми лауреачĕ Алексей Воробьев, Энтип Ваççи тата çак йĕркене çыраканĕ — тăван поэзи никĕсне хывса хăварнă, халăх асне яланлăхах кĕрсе юлнă Константин Иванован çуралнă кунне чысласа ирттерекен поэзи уявне кайнăччĕ. Тарават йышăнчĕ пире Пушкăрт çĕрĕ. Тăп-тăрă, сивĕ шывлă çăлкуççен шăнкăр-шăнкăр юррипе, вăрмансемпе катасен шухăшлă кашлавĕпе, куккук та шăпчăк сассипе таварчĕ вăл пирĕн ăшă салама. Тĕрех сисĕнчĕ: манмаççĕ аслă поэта унăн янташĕсем, унăн вилĕмсĕр ятне халăх ячĕпе пĕр хурса хисеплеççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ, Слакпуç çыннисем пире итлеме йышлăн пухăнчĕç, çывăхри ялсенчен те машинсемпех килчĕç.

Чăннипех те пуян Слакпуç таврашĕнчи çутçанталăк. Кус умĕнчи ÿкерчĕк чуна çĕклет. Çавăнти хура тăпрапа ешĕл ÿсентăранăн, хĕвеллĕ кун сенкер тÿпене куç хывса выляккан çăлкуççен асамĕ Константин Иванов пек поэта çуратса çитĕнтернинчен тĕлĕнме те кирлĕ мар пек. Мăнаçлăх туйăмĕпе çĕкленсе, сăвăсен пĕр кĕнекине çапла çырса парнелерĕм:

**Туллă-сăртлă та вăрманлă,**
**Çăлкуççемлĕ, Пушкăртра**
**Куç хавaслă та чун анлă,**
**Вăй çĕклет пек кăкăра.**

**Паянхи çынсен кунçулĕ,**
**Паянхи Слакпуç шăпи**
**Çавăнпах телейлĕ пулĕ**
**Тав курки пекех чăппи.**

Чыс йăлине тытса, эпир поэт виллăприйĕ çине чечек пуçкăшăлĕ хуратпăр. Хумханса, поэтăн аслă шăпипе мухтанса пăхрăмăр эпир унăн музей çуртне. Ун хыççăн — çĕнĕ тĕлпулусем. Кашнинчех пире хапăлласа кĕтсе илчĕç. Поэзие юратакан çын тăван çĕре те юратать, ун пархатарне ÿстерме тăрăшать. Слакпуçпа ун таврашĕнчи ялсенче те халь пурнăç лайăхланса пырать, ĕç тухăçлăхĕ ÿсет. Çакăн çинчен пире «Дружба» колхоз председателĕ Александр Федорович Астафьев, партком секретарĕ Василий Дмитриевич Тарасенко тата пире ырă кăмăлпа кĕтсе илнĕ, ертсе çÿренĕ, ăсатса янă çынсенчен пĕри, КПСС Белебей райкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕн инструкторĕ, чăваш каччи Михаил Петрович Сидоров каласа пачĕç.

Тăван Шупашкара тухса килес умĕн эпир, юлашкинчен, Белебейри педучилищĕре пултăмăр, сăвăсем вуларăмăр, кĕнекесем парнелесе хăвартăмăр.

Кĕçех çула тухма та вăхăт çитрĕ.

Хамăрпа пĕрле эпир Слакпуç çĕрĕнче ÿснĕ çавра çăкăрпа тĕрĕллĕ алшăлли, чи ăшă саламсем илсе килтĕмĕр.

**Ю. АЙДАШ.**